К 84.09(=чув)
С 20
Ч-40403

Раиса САРПИ



# *Тавах сире, атте-анне*

Национальная библиотека ЧР
4-040403

ОБЯЗ...ЬНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

Раиса Сарпи



# *Тавах сире, атте-анне*

*Сонетсен кăшăлĕ*

Шупашкар
2006

УДК 821.512.11
ББК 84 (2Рос=Чув)6-5
С 20



ПРОВЕРЕНО

ч-40403

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
...ВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИ...

© Сарпи Р.В. , 2006



1

*Сире мухтасшăн эп, атте-анне!*
*Эсир пулман пулсан пулмастăм эпĕ!*
*Эсир, мана парса этем сăнне,*
*Чĕрçĕр çинче сиктертĕр, пăхрăр çепĕç.*

*Атте-аннеллĕ пурнăç вăл — телей!*
*Хама ялан хăватлă, вăйлă туйрăм.*
*Самантсерен çĕн чăнлăхпа эп пуйрăм,*
*Хăюллăн утрăм Çăлтăрлă Тĕле!*

*Инкек çăмхи ўксессĕн умăма,*
*Атте-анне, тăраттăр çумăма...*
*Мана çăлатчĕ Тăванкиль çăтмахĕ...*

*Кил-çемьере упраттăр Юрату!*
*Кашнин валли çитетчĕ йăпату.*
*Сире каласшăн эпĕ тав сăмахĕ.*



2

*Сире каласшӑн эпӗ тав сӑмахӗ,*
*Атте-аннем, Сире мухтав та тав!*
*Ҫак пурнӑҫра эсир памарӑр маххӑ,*
*Ура хурсан та сив суя-ултав!*

*Шӑпа шӑлне эсир шутларӑр шаккӑн,*
*Ватмасӑр килпетре ӑс-тӑн атне.*
*Юратӑва туйса сипет-пылаккӑн,*
*Ҫӗклерӗр ун чапне те хӑватне!*

*Ача-пӑча ҫуратрӑр та ӳстертӗр —*
*Ҫут тӗнчене ҫичӗ енне вӗҫтертӗр!*
*Хисеплӗн тытрӑр Пурнӑҫ Саккунне!*

*Сар Кун курма эсир пире пиллерӗр,*
*Ҫӳл тӳпене ӗмӗтсене тӗллерӗр!*
*Сирте куратӑп Турӑсен сӑнне!*







3

*Сирте куратăп Турăсен сăнне,*
*Атте-анне! Эсир ятуллă, урă!*
*Сирте туятăп Улăпсен Мăнне!*
*Сирте — ĕмĕрсенчи культура!*

*Юрра-кĕвве эсир маттур, ăста!*
*Юратура пурнăç пури пуратăр!*
*Кашни çынрах талантлăха куратăр,*
*Сирте пур чунлăх та, тăн та, ăс та!*

*Сиртен вĕрентĕм пурнăçа савма,*
*Памарăм тăшмана хама авма.*
*Атте-аннем, эсир — чĕре ахахĕ!*

*Çак пурнăçа Чунпа хитрелетсе,*
*Ыр-хаярсен ретне ситрелетсе,*
*Эсир пиллерĕр Пурăнăç Юмахĕ!*





*4*

*Эсир пиллерĕр пурăнăç Юмахĕ —*
*Юмахри пек эп пурăнтăм ялан.*
*Çукран пур турăм. Суя çын сăмахĕ*
*Тивсен... васкарăм эп тăван яла.*

*Атте-анне, сире курсан, тӳрех*
*Пур хуйхă-суйхă авăра путать...*
*Атте-анне, эсир — ман Чăн Тӳре!*

*Сăмахăр Çăлтăр-Ĕмĕте çутать!*
*Ял-йыш, тăван сиртен илет ыр тĕслĕх!..*
*Çут пархатар — ӳркевсĕр тĕплĕ Ĕçлĕх*
*Йăх-ямаххат ĕрчетрĕ вашават!*

*Хăна-вĕрлешĕн — çăкăрлă-тăварлă!*
*Пур халăхпа тăванлă, туслă-варлă!*
*Эсир ялан çынна пит таракат!*





5

*Эсир ялан çынна пит тарават,*
*Атте-анне! Çынра куратăр ăнлăх!*
*Çавăнпала хисеплĕ, чыслă ят*
*Сире пиллерĕ чинсăрах çут Чăнлăх!*

*Пуш вырăнта ĕрчетрĕр сарă сад,*
*Улма-çырла ыр халăха сĕнетĕр!*
*Кÿршĕсене кĕрекене чĕнетĕр —*
*Чыслатăр патша евĕр сарăлса!*

*Юрлатăр хăвăр çырнă юррăра,*
*Хисеплесе Сăпайлăх-туррăра,*
*Çынпа пĕрле ташлатăр çăмăл-çăмăл!*

*Çын кăмăлне пĕлетĕр çĕклеме!*
*Хаваслăха илетĕр çĕклеме!*
*Сирте ялан хĕвеллĕ ырă кăмăл!*



6

*Сирте ялан хӗвеллӗ ырӑ кӑмӑл —*
*Атте-анне! Ҫӗнсе йывӑрлӑха,*
*Чуна чикет пулсан та йӗплӗх-хӑмӑл,*
*Сапатӑр ҫут хӗвеллӗ вӑрлӑха!*

*Хӗвеллӗ ырӑ тулӑх ӳстеретӗр,*
*Шӑтма памасӑр талпиҫенлӗхе.*
*Ҫӗн кунлӑ ырӑ халвиҫенлӗхе*
*Ӗмӗтсене хевтеллӗн вӗҫтеретӗр.*

*Сирте — ыр йӑласен виҫесӗр Чапӗ,*
*Ҫак ыр йӑла пирте те вӑрлӑх сапӗ!*
*Пирте чечекленет Хӗвеллӗ Кӑмӑл!*

*Инҫе ҫула ҫывӑхлатса, Киле,*
*Атте-анне, сар йӑвӑра килес!*
*Сирӗнпеле чуна хавас та ҫӑмӑл!*







7

*Сирĕнпеле чуна хавас та çăмăл —*
*Атте-анне! Чĕм панăшăн пире,*
*Тав! Тав! Мухтав! тесе анчах эп тăмăп,*
*Кăтартнăшăн Хĕвеллĕ Çут Ире,*

*Сире шевлеллĕ ырă Канăç парăп,*
*Эп сыхлăп-пăхăп ватлăхра сире,*
*Чир-чĕрсене сиртен сире-сире*
*Чунăрсене хĕм-вутлă шанăç ярăп.*

*Çунатсене эп сарăп, сарăп, сарăп,*
*Çупăрласа, асамçă евĕр карăп*
*Пуç кăшăлле çич тĕслĕ асамат...*

*Юмах çĕрне сире эп илсе кайăп,*
*Эп ахальтен шыратăп-и Вуткайăк, —*
*Кÿретĕр чĕрене сÿнми хăват!*



8

*Кӳретӗр чӗрене сӳнми хӑват,*
*Атте-анне! Сире эп пархатарлӑн*
*Парнелӗп ӳстерсе юмахлӑ сад.*
*Ир-кас ӗҫлетӗп эп шӑрҫаллӑ тарлӑн...*

*Ир-кас шӑрантаратӑп сӑвӑсем.*
*Хӗвел тӗрриллӗ ҫӗн ҫунат-суратлӑ,*
*Каш-кашлӗ манӑн садӑм пин туратлӑ!*
*Ман садӑмра, ҫук, вӗҫмӗҫ сӑвӑссем!...*

*Сар кайӑксем унта шӑратӗҫ юрӑ,*
*Унта ярхайӗ Мӑн Хӑватлӑ Турӑ,*
*Кӑтартӗ вӑл Пуласлӑхӑн сӑнне!*

*Атте-анне, сӑнарӑр ӗмӗр сӳнмӗ!*
*Атте-анне, ҫветтуй хӑватӑр тӳнмӗ!*
*Эсир пурри — телей, атте-анне!*



Национальная библиотека
Чувашской
Республики



## *9*

*Эсир пурри — телей, атте-анне!*
*Хам телее ниçта шăнăçтараймăп...*
*Усалсене эп ямăп яхăнне,*
*Ыр ĕçсенчен тарас тесен тараймăп...*

*Манра — эсир пилленĕ хĕрӳ вут.*
*Çав хĕм-вутра — эсир пилленĕ Çутă.*
*Çав çутă патнелле — ман Çĕнĕ Утăм...*
*Хампа пĕрлех — Çунатлă Юланут!*

*Ӳксе юлсан та тăрăп та эп чупăп,*
*Вуткайăк юррине пĕрех эп тупăп.*
*Эп ĕненетĕп Пурăнăç Чăнне.*

*Пĕрре çеç мар çак тĕнчере хĕрӳллĕн,*
*Çак пурнăç юхăмне чăмса кĕрӳллĕн,*
*Чун хавалне çĕклетĕр манăнне!*







*10*

*Чун хавалне çĕклетĕр манăнне,*
*Атте-анне! Таса Хăватлăх евĕр,*
*Çутатăр ачамсен ăсне-тăнне*
*Еткерлĕх-несĕл пиллĕх шевĕ.*

*Сире савса эп пурнăп ĕмĕрех...*
*...Каллех-каллех, Çут-Феникс кайăк майлă,*
*Килетпĕр чĕннĕн, çĕннĕн! вĕр-çĕн шайлăн —*
*Каллех йĕрлетпĕр хамăрăн йĕрех.*

*Çакна шанни парать хăват, вăй-хал.*
*Çавăнпала чĕнет, йыхрать çĕн мал.*
*Çавăнпала чĕреçĕм — Улăп-паттăр!*

*Пуласлăхра куратăп эп сире.*
*Юмахлăха шанать ман чун-чĕре!*
*Ĕмĕрлĕхе хевтеллĕ шанăç патăр!*





### 11

*Ĕмĕрлĕхе хевтеллĕ шанăç патăр,*
*Атте-анне! Сире юратнипе*
*Хевтен пурнатăп çынлăх раттипе,*
*Уяв валли çĕлетĕп сарă чатăр.*

*Çав чатăрта чăвашсене саламлăп,*
*Ыр кун эп сунăп пĕтĕм халăха.*
*Хам халăхсăр эп юлмăп тăлăха!..*
*Çĕнĕ Кунра пулатпăр çĕнĕ ламлă!..*

*Ÿссе-ÿссе пырать хăюллă халăх,*
*Хăйне валли вăл лартĕ аслă палăк —*
*Каллех вăл çĕклĕ Вавилон-тăва!*

*Пире те ăрăвăмăр мухтĕ, савĕ.*
*Пире те çитĕ ачапчамăр тавĕ!*
*Çуратнăшăн, юратнăшăн — тавах!*





12

*Çуратнăшăн, юратнăшăн — тавах!*
*Тесе юрлать чăваш çынни аваллăн.*
*Çăлтăр пекех çутса Юратăва,*
*Атте-анне, мухтар сире хаваллăн!*

*Ӳркенер мар хывма Мухтав Юрри,*
*Хавхаланса юрлар юрра хĕрӳллĕн!*
*Атте-аннеçĕм, пулăр хĕпĕртӳллĕ!*
*Сире сыхлатăр Чăн Чăваш Турри!*

*Эп хам та чыслăхра сире упратăп,*
*Атте-анне, сире чăн-чăн тупра! теп.*
*Сире савса çыратăп çак сăвва.*

*Шăрăх кунри хĕвеллĕ çумăрла,*
*Мухтав юрри чунтан юрла-юрла,*
*Сире парнелĕп çут юратăва!*



### 13

Сире парнелӗп ҫут юратăва,
Атте-анне! Эсир мана ҫуратнă.
Эсир мана ҫуратнă та юратнă,
Эсир — чи ҫывăх, савнă тус-тăван.

Сиртен хакли ҫук ҫутă тӗнчере.
Эпир — пӗр ҫыхă-тӗмӗ, чӗрӗ тӗвӗ!
Пире ялан пӗр ӗмӗт-шухăш хӗвӗ.
Пӗр ҫемӗпе тан тапӗ чун-чӗре!

Яланваскатăп сирӗн ытама!
Эсир — ман Вут Аҫа та, Вут Ама!
Эсир, эсир мана чӗм хӗмӗ патăр!

Эп сирӗн ятăрпа чуна ҫăватăп.
Эп сирӗн ятăрпа тупа тăватăп.
Чун тӳпинчех ҫуталӗ сирӗн ятăр!







14

*Чун тӳпинчех çуталĕ сирĕн ятăр,*
*Атте-анне! Сирĕн ята ярса*
*Çӳремĕп эп супса, çăвар карса.*
*Эсир манри этемлĕхе туятăр!*

*Хеветлĕхе ачамсене куçарăп,*
*Вĕрентĕп вĕсене ĕçченлĕхе.*
*Чăлăмласа чунри çĕнĕлĕхе,*
*Çĕн хавалпа эп çĕнĕ ĕç пуçарăп...*

*Чăваш йышра ман пулĕ çĕн эртеллĕх,*
*Чăваш каллех чыслатĕ çĕнĕ Эллĕх.*
*Татах вăл хитрелетĕ хăй сăнне.*

*Çĕн ĕмĕтпе тулма хавал панишĕн,*
*Ялан малта пулма халалланишĕн,*
*Сире мухтасшăн эп, атте-анне!*



15

*Сире мухтасшăн эп, атте-анне!*
*Сире каласшăн эпĕ тав сăмахĕ!*
*Сирте куратăп Турăсен сăнне,*
*Эсир пиллерĕр пурăнăç Юмахĕ!*
*Эсир ялан çынна пит тарават,*
*Сирте ялан хĕвеллĕ ырă кăмăл,*
*Сирĕнпеле чуна хавас та çăмăл,*
*Кӳретĕр чĕрене сӳнми хăват!*
*Эсир пурри — телей, АТТЕ-АННЕ!*
*Чун хавалне çĕклетĕр манăнне!*
*Ĕмĕрлĕхе — хевтеллĕ шанăç патăр!*

*Çуратнăшăн, юратнăшăн — тавах!*
*Сире парнелĕп çут юратăва!*
*Чун тӳпинчех çуталĕ сирĕн ятăр!*



*Раиса Сарпи 1951-мĕш çулхи кăрлачăн 2-мĕшĕнче Патăрьел районĕнчи Нăрваш-Шăхаль ялĕнче çуралса ӳснĕ. Ялти вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Шупашкарти И.Н.Ульянов ячĕллĕ чăваш патшалăх университетĕнче историпе филологи факультетне пĕтернĕ.*

*1973-1985 çулсенче чăваш кĕнеке издательствин ача-пăча редакцийĕнче редакторта ĕçленĕ. 1986-1990 çулсенче чăваш патшалăх пукане театрĕнче литература пайĕн пуçлăхĕнче вăй хунă. «Хатĕр пул» альманахра, «Пике», «Путене» журнал редакцийĕсенче тĕп редакторта ĕçленĕ. Халĕ – профессиллĕ литератор. Поэт. Драматург.*

*Раиса Васильевна чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши, Алексей Талвир, пĕтĕм тĕнчери тĕрĕк халăхĕсен Нежип Фазыл ячĕллĕ премисен лауреачĕ. Чăваш республики культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Раççей писателĕсен союзĕн членĕ.*


**Раиса Сарби**

**Благодарю вас, родители**

*Венок сонетов на чувашском языке*



Подписано к печати 10.07.06. Формат 60x84/32.
Бумага офсетная. Гарнитура Ариал. Печать Офсетная.
Тираж 5000 экз. Заказ № 90. Цена свободная.

Отпечатано в типографии издательства «Новое время».
428005, г.Чебоксары, ул.Ломоносова, 2. Тел.: 46-43-46.

47



*Пирĕнтен кашниех хăйĕн тăван çĕрне, тăван уй-хирĕсене, хамăрăн Атăла, ешĕл вăрмансене юратать.*

*Çак тараватçĕр çинче пирĕн чăваш халăхĕ пурăнать.*

*Раиса Сарпи евĕр поэтсене, чăн та, халăхăн теме пулать. Унăн сăввисем манра ачалăх туйăмĕсене, хаваслăха, несĕлсен çĕрне юратас кăмăла вăратаççĕ. Эпĕ ăна çакăншăн тав тăватăп.*

*Кашни вулакан Тăван çĕршывăн, тăван атте-аннен çепĕçлĕхĕпе юп куртăр.*

*Çемйене, ачасене тата ветерансене тевĕш паракан Чăваш Республикинчи "Забота" обществăлла фонд президенчĕ Эдуард АЛЕКСЕЕВ.*

РЕСПУБЛИКАНСКИЙ ОБЩЕСТВЕННЫЙ ФОНД

ЗАБОТА